**Атте-анне юратнипе**

Атте-анне юратнă пек
Пире никам та юратман.
Атте-анне юратнипе
Эпир ниçта та хур пулман.

Эпир ăçта-ăçта пулман,
Атте-анне ятне яман.
Çитес çĕрсем татах та пур
Тӳсес кунсем татах та пур.
Атте-ачне юратнипе
Йывăррине çăмăл тăвар,
Атте-аннемĕр пек пулар.

Тăван çĕршыв юратнă пек
Пире ниçта та юратман.
Тăван çĕршыв юратнипе
Пире тăшман хăратайман.

Эпир ăçта-ăçта пулман,
Тăван çĕршыв, сана манман.
Çитес çĕрсем татах та пур
Туссем-йышсем ютра та пур.
Ютри туса тăван тăвар,
Çĕршыв-аннемĕр пек пулар!

*Урташ, В. Атте-анне юратнипе : [сăвă] / В. Урташ // Урдаш, В. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран : сăвăсемпе поэмăсем / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С.100.*